**«Йӑлт тухса ӳкрӗ…»**

Йӑлт тухса ӳкрӗ
йӑлтӑркка ӑшӑ пӗрчӗ
юр ҫине.
Кусран ӳксе юлнӑскере иртен-ҫӳрен
курмарӗ,
сивӗ чӗпӗтнӗрен – кам ӑҫталла –
саланчӗ.
Папка ҫеҫ
пепкенни пек ырӑ тӗлӗкӗнче
тутине хускатса илчӗ.
Атӑл ҫеҫ
аслӑ хусканӑва туйса
асамат кӗперӗ пек йӗрсемпе
пӑр валемлеме
палӑртрӗ.
Ҫав вӑхӑтран пусласа
ҫӗр анне варӗнче
ҫуркунне ӳтленчӗ.

*1976*

*Эртиван, С. «Йӑлт тухса ӳкрӗ...» : [сӑвӑ] / С. Эртиван // Чӑваш литературин антологийӗ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 495.*